30-3

АЛАКĔР ВАÇЛЕЙĔ

101

# ПУЛАС ÇĔНĔ ЙАЛ

(Хĕрлĕ-Ђутай районĕнђи «Петров Ç. П.» комунă пурнăçĕнђен)

ОЂЂЁРК

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Академ. ящ. № 25.

11 пус.

ЂАВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар 1930

Йулташ, хут пӗл... кӑ...

ан йул, хут пӗлмен ҫынна вӗрентме пулӑш!

*Хут пӗлмен ҫын политӗк тулашӗнче тӑрать.*

*(ЛЕНИН)*

5 ҫуллӑх план...

**Хут пӗлменлӗхпе кӗрешекен**

**Чӑваш Тӗп Совечӗ**

Хут пӗлменнисене вӗрентме пулӑшма ............ тенкӗ те ........ пус хыватӑп

Алӑ пусатӑп:

„..........“ ................................1930 ç.

**Йӑнӑш ҫапӑннӑ:**

17-мӗшпе 18-мӗш страницӑри статйа йачӗсене

КНИГОХРАНИЛИЩЕ

334
А-45

АЛАКЁР ВАÇЛЕЙЁ

# ПУЛАС ÇЁНЁ ЙАЛ

(Хёрлё-Ђутай районёнђи «Петров Ç. П.» комунă пурнăçёнђен)

ОЂЂЕРК

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

ЧУВАШ КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Ак. ... № 25.

№ 3236

Ђăваш Кёнеки Уйрăмё
Шупашкар — 1930

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза
Заказ № 2068.
Чувашлит № 784.
Тираж 5.000 экз.

## Тĕтреллĕ шухăшсем.

Сурăм. Шап-шурă, лапсăркка симĕс тăрлă хурăнлă вăрман çумĕнҫе ларат̆ вăл йал. Вăрман вĕçĕ-хĕррине курма çук. Таçта çитиҫҫен ҫăсăлат̆ вăл. Таçта унăн вĕçĕ, таçта хĕрри... Вăрман ăшне кĕрсе, урлă каçатăп, тесе шухăшламалли çук... Унта лаҫакаллă вырăнсем хир кайăкĕпе етем çулне картлаççĕ... Сăр вăрманĕсем теççĕ ку вăрмансене. Вĕсем виттĕр çутă çĕлен пек,васкакан шывлă Сăр шывĕ авкаланса йухат̆. Ана упах, лаҫакаллă вырăнсем ҫараймаççĕ. Вăл ҫăтлăх вăрмана, çӱллĕ сăртсене касса татса йухат̆.

Тăп-тăрă уйар, лăпкă çанталăкра хурçă шавĕ. Кулленех вăрмана касса виттĕр тухакан хурçă пăравус шавĕ вăл. Йанăрат̆ вăрман. Кӊапиххăран Çĕмĕрле стантсине çӱремелли ҫукун çул çывăхра. Анҫах ăна куçпа курма çук. Ана вĕçхĕрсĕр вăрман хупласа тăрат̆. Хĕрлĕҫутай йенҫен Сурăм йалне уйхирсем ыталаççĕ. Унсăрăн май килмест. Унсăрăн йепле тăранса пурăнас. Тырпул акса тумалла.

Ҫакнашкал вырӑнта Сурӑм. Октӑпĕр револютси Сурӑм йалне ҫĕнетрĕ. Кунта ҫĕнĕ вӑй. Кунта хастарлӑ комсомолĕссем. Кунта шкул, хастарлӑ уҫҫитлĕ.

1927-мĕш ҫул. Кĕркунне. Вӑрман саралса ҫитнĕ вӑхӑтра комсомолĕссен шухӑшĕ те улшӑннӑ. Вӑрманӑн сӑнсӑпаҫĕ улшӑннӑ. Ытти ҫулсенҫе те ҫавнашкалах улшӑнса пынӑ вӑл. Анҫах кӑҫал, кӑҫал вӑрманпа пĕрле етем пуҫĕнҫи шухӑшсем те улшӑннӑ. Ҫавӑнпа паллӑ кĕркунне ĕнтĕ вӑл. Унсӑрӑн ӑна аса илес ҫук.

— Пурнӑҫа мухтамалла мар. Ҫухӑн пурӑнатпӑр епĕр. Йалхуҫалӑх хатĕрĕсем ҫитмесҫĕ, ĕҫ ылҫӑхĕ кашнинех мар. Уйрӑмӑн-уйрӑмӑн вӑй ҫитмест. Ĕҫе вӑхӑтра туса пыраймӑстпӑр. Йаланах пуйансен куҫĕнҫен пӑхса пурӑнмалла-и пирĕн?.. Совет влаҫĕ пĕрлешсе ĕҫлеме калаҫке, — тенĕ комсомолĕссенҫен нумайĕшĕ.

— Халӑха каласа ӑнлантармалла, — тенĕ уҫҫитлĕ Корнилӑв.

— Корнилӑва ку ĕҫе тума хушас. Вӑл пĕлекен ҫын. Унсӑрӑн пире халӑх итлемĕ, — тенĕ комсомолĕссем.

Тӑрӑшаканскер, ĕҫҫен ҫын пулнӑ Корнилӑв. Шурӑ йур вӑрмансене, уйхир, ҫырма-

çатрасене хупласа тӑрса ирӗлсе пӗтетҫенех канмасӑр ӗçленӗ вӑл. Анҫах йалта кулаксем те вӑйсӑр пулман. Корнилӑв сӑмахӗсене итлекен хресҫенсен шухӑшӗсене тӗтрелетнӗ вӗсем.

— Выçӑ ларсӑ курманха есӗр. Пури, çуки, как-никак харпӑр хӑйӗн,—тенӗ вӗсем.

Çапла йал çинҫе тӗтреллӗ шухӑш çакӑнса тӑпӑ. Пӗрисем Корнилӑв, комсомолӗссем йенелле, теприсем—кулаксем каланине ӗненнӗ. Комсомолӗссем йенелле туртӑнакансен шухӑйӗшсем те тӗтреллӗ пулнӑ. Вӗсем кайлӑмайлӑ шухӑшланӑ. Ҫылай шухӑшланӑ...

Нимӗнле ертел те тӑвайман комсомолӗссем. Анҫах ӗмӗҫӗ пурпӗрех сӳнмен. Вӗсен ҫӗринҫе хастарлӑ çӗнӗ вут хӗмӗ, нихçан сӳнми, никам сӳнтерейми вут йӑлкӑшнӑ. Малалла, малаллах йанӑ вӗсем хӑйсен ӗçне. Вӗсем парӑнман.

## „П У Ҫ А Х“.

Çуркунне. 1928-мӗш çул. Çурхи шывсем шавласа кӗрлесе иртсе кайнӑ хыççӑн, нӳрӗклӗ çӗр типме пуçланӑ.

Çуркунне. Вӑрман çывӑхӗнҫи йалта çуркунне кирек камӑн та ҫун хавасланаӑ. Çуркунне пуринҫен маларах çамрӑксене тыткӑ-

на илекен вăхăт. Йепле аван. Çара вăрман симĕсленет. Ăçта пынă унта симĕс курăк, ђеђексем йешереççĕ. Çук. Ку тапхăр çамрăксен ђĕрисем йуратушăн мар, урăх, расна вутпа, пĕрлешсе ĕçлессишĕн çуннă.

Йал халăхĕ комсомолĕссемпе хутшăнасшăнах мар. Сахал мар тăрăшнă комсомолĕссем. Корнилăв уђђитлĕ те халран кайса вĕçне çитнĕ.

— Епĕр хамăр пĕрлешсе ĕçлеме пултараймастпăри?... Пирĕн ĕçе курсан ђухăнсем хăйсем пĕрлешĕçха. Тавай пĕрлешетпĕр!.. Çамрăксенђен ертел тăватпăр, — тенĕ парăнмасăр комсомолĕссем.

— „Сурăм йалĕнђе çĕре пĕрлешсе ĕçлемелли йулташлăх органисатсилес. Унăн йаđĕ „Пуђах“ пултăр, — тесе çырнă комсомолĕссем ђи первайхи протокколĕ çине. Первайхи протокколĕ пулман вăл. Пĕрлешсе ĕçлес тĕлĕшпе ĕçлес тесе йышăннă постановленисенђен çеç пĕрремĕш пулнă вăл. Ку ертеле малтанах 10 хуçалăх, килхуçи комсомолĕссен хуçалăхĕсем пĕрлешнĕ пулнă.

„Пуђах“ йатлă ертел ђăнахах та, йал калăпĕпе таваштарса пăхсан, уйхир варĕнђе тăлăххăн, çинçе хăмăл çинђе сулланса лара-

кан пуђах пек çеç пулнă. Çук, ку пуђах тутă пулас çук, вăл пурпĕрех типсе хăрмалла,—текенсем нумай пулнă.

„Пуђахри“ комсомолĕссем пуçа усман, аллисене çурăм хыçне хуçлатса тăман. Вĕсем ĕçленĕ, ĕçленĕ... Вĕсем йулташлăх ђленĕсен анисене пĕрле сухаланă. Пĕрин лаши çук пулсан, урăх хатĕрсем пулнă. Кашни ђленăн йалхуçалăх ĕçне ĕçлемелли хатĕрсем пĕр çынăнни пек—йулташлăхăн пулнă.

— Лепĕртететтĕр...

— Ан ухмахланăрђђĕ...

— Выçă вилеттĕр,—тесе мăшкăланă та, кулнă та вĕсенђен йал çыннисем. Йулташлăх ђленĕсем, хăлхисене çĕрмамăкĕ ђикнĕ пекех, вăл сăмахсене итлемен. Иртен пуçласа каçђен ĕçленĕ. Савăннă. Йурланă. Ырма шутламан.

— Ĕçлесе кăтартăпăрха,—тенĕ пулас.

Йулташлăхри ĕç хуранти пек вĕресе тăнă. Кăçалхи çул вĕсем кулаксем патне пулăшу ыйтма каймасăрах хăйсен çĕрне хăйсен вăйĕпе ĕçлесе тунă. Ђухăнсем нумайĕшĕ курнă ăна. Пурпĕрех шансах çитмен. Малашне мĕн пулассине кĕтнĕ. Кулаксем те сухар пулман. Вĕсен куçĕсем йулташлăх пултарулăхне аванах курнă. Тĕтреллĕ шухăшсем сирĕл-

сех пынине те аванах туйнӑ вӗсем. Ҫавӑнпа йулташлӑх ҫулне картламалли мел шыранӑ. Унсӑрӑн йухташлӑх вӗсене таптаҭ. Хӑтӑлмалла. Йулташлӑха кирек мӗн пулсан та такӑнтармаллах. Ҫапла кулаксен политтӗкӗ.

## Вӑрлӑх ҫунаҭ...

„Пуђах“ йулташлӑхӑн иртерех сухаласа пӑрахнӑ анисем уйра ула-ђӑлан курӑннӑ.

— Акса хӑвараҫђӗ. Акса хӑварсан ӗҫ кайаҭ,—тенӗ ђленсем.

Вӑрлӑх ҫитмен пирки патшалӑхран илнӗ. Ӑна пӗр ампара вырнаҫтарнӑ. Пайан валеҫсен ыран акма та йураҭ. Йулташлӑх та, ђухӑнсем те вӑрлӑхсӑр йулмӗҫ,—тенӗ йулташлӑх ђленӗсем.

Пухура камӑн вӑрлӑх суккисене ҫпискӑ тӑрӑх ђӗннӗ. Вӑрлӑх илме тивӗҫлисене пурне те панӑ. Хресђенсем пуху пӗтнӗ хыҫҫӑн пурте ыранхи куна, ампарти вӑрлӑха илсе, уйа илсе тухса акассине шанса саланнӑ. Вӗсен пиђӗсем ҫинђе савӑнӑҫ палӑрнӑ. Ӑҫтан савӑнас марха? Акса хӑварсан пур пӗрех тепӗр сывлӑш. Тырри пулаҭи, пулмасҭи, ҫапах та акмасӑр йулмасҭ. Йулташлӑх ђленӗсем те малашнехине, ыранхи куна шаннӑ.

Пуху пĕтсен вăхăт нумай иртмен. Кун çутине каç тĕттĕмлĕхĕ хура ђатăрпа витнĕ пек хуплана. Ĕç вăхăђĕ Çамрăксем, ађапăђасем те урамра нумайђђен ларман. Йал ăшă ăйăхра пулнă.

— Пушар!.. Пушар!..—тенĕ хыттăн йанăракан сасăсем илтĕнсе лăпкă ыйăхпа çывăракан йал çыннисене сасартăк ура çине тăратнă. Вĕсем айалти кĕпейĕмсемпе, çара уран, çара пуçăнах урама туха туха ђупнă.

Вĕсен куçне урама тухнă тухманах йалкăшакан хĕрлĕ çутă хуплана. Вăрлăх ампарĕ йенђи пĕлĕт хĕрлĕ пулнă.

— Вăрлăх çунаť!.. вăрлăх!—тенĕ сасăсем.

Вăрлăх ампарĕ патне ђупнă. Вут ђĕлхисем ђăнахах та йалти йулташлăх ђленĕсемпе ђухăнсен ыранхи шанăçне тавралла хупласа илнĕ. Çулламаллипех çуллана вут ђĕлхисем вăрлăх ампарне.

— Ах, пĕтрĕмĕр... ах! ах!..

— Выçах вилетпĕр ĕнтĕ... выçах...

— Кам тухатмăшĕ тивретсе йанă-ши...

Хуйхăллă сăмахсем çунă, куççуђсем шапăртатса йухнă хăшпĕрин. Кулаксем айакра çуннине пăхса тăрса, систермесĕр вăрттăн кулнă. Комсомолĕссем, йулташлăх ђленĕсем

йӗмен. Вӗсен кӑкрисенҫе ҫилӗ капланса пынӑ. Вӑрлӑх ампарне кулаксем ҫӗртсе йанине аван пӗлнӗ вӗсем. Вутпа хӑйсене хӑйсем шеллемесӗр кӗрешнӗ. Анҫах пушар вӗсенҫен те вӑйлӑрах пулнӑ иккен. Вӑрлӑх ампарне ҫӑлайман. Ку „Пуҫах“ йулташлӑхпа ҫухӑн хресҫенсен ыранхи шанҫӑкне кӗтмен ҫӗртен татса антарнӑ.

## Вунпилӗк хуҫалӑх.

Йулташлӑх умӗнҫе пысӑк хӑрушлӑх хура ҫӑмӑр пӗлӗҫӗ пек ҫакӑнса тӑнӑ.

— Вӑрлӑх ҫук, мӗн акатпӑр,—тенӗ йулташлӑх ҫленӗ Колессӑв.

— Патшалӑхран пулӑшу пулмасан сӳнетпӗр епӗр,—тенӗ нумайӗшӗ.

Вӑрлӑх ампарӗ ҫунса кайни, йулташлӑх ҫленӗсемсӗр пуҫне, йалти ҫухӑнсене калама ҫук пӑшӑрхантарнӑ. Вӗсем кулаксем йулташлӑха курайманнине, вӑрлӑха тивертсе йанине пӗлнӗ. Ҫавӑнпа вӗсенҫе ҫилӗ каплансах пынӑ.

— Вӑрлӑха ҫунтарса йарса пире тӗппипех пӗтерме шутларӑр пулӗ. Пӗрин вуҫах ҫук пулсан, теприн пур. Ушкӑнпа пӗтӗҫсе те пулин кӑшт акса хӑварар,—тенӗ ҫухӑнсем.

Тепӗр кунне йулташлӑх пуххи. Вӑрлӑх ҫинҫен сӳтсе йавнӑ пуху. Нумай каласнӑ. Ҫленсен пур-ҫук вӑрлӑхне пӗтӗҫтерсе шутланӑ. Сахал.

— Есӗр парӑнмастӑр. Ҫав тери пысӑк инкек пулнӑ хыҫҫӑн та пуҫа усмастӑр. Пирӗн те сирӗнпе хутшӑнас. Сирӗн пек ӗҫҫен шухӑшлӑ ҫамрӑксемпе йепле килӗшес мар пирӗн.

— Ҫӑмӑртансан ушкӑнпа вӑйлӑрах пулӑпӑр.

— Микишкӑна йалӑнмӑпӑр текех,— тенӗ пухӑва пынӑ ҫухӑнсем.

Вӗсем пӗрерӗн-пӗрерӗн сӗтел патне пырса, харпӑрхӑй йатне ҫыртарнӑ. Мӗн тума ҫыртарнӑ?—тейӗ вулакан. Йулташлӑх ҫленне кӗме. Ушкӑнпа пӗтӗҫсе пӗр ҫын пек тӑрӑпса ӗҫлеме.

— Мӗн пулаҭ-килет, пӗҫҫен мар, мирпе,— тенӗ йаҫӗсене ҫыртаракансем.

Йулташлӑха кӗрекенсем вунпилӗк хуҫалӑх пулнӑ. Вуннӑ ҫумне вунпилӗк хушсан ҫирӗм пилӗк пулаҭҫке. Ҫирӗм пилӗк хуҫалӑхӑн вӑйӗ те вунӑ хуҫалӑх вӑйӗнҫен ҫылай патмар. Ҫавӑнпа йулташлӑх ҫленӗсем пӗр самантлӑха вӑрлӑх ҫинҫен манса, савӑннӑ. Савӑнӑҫ нумайҫҫен тӑсӑлма пултарайман. Вӑрлӑх ҫук-

ки асран кайман. Ӑҫтан асран кайтӑр вӑл, вӑрлӑх йулташлӑхӑн малашнехи вӑйӗ, малашнехи пурнӑҫӗ.

Тепӗр кунне уйа тухас выранне ҫирӗм пилӗк хуҫалӑхлӑ йулташлӑх вӑрлӑх патне кайнӑ.

Патшалӑх ураланма пуҫланӑ йулташлӑха пулӑшу памасӑр тӑма пултарайман. Кивҫен вӑрлӑх панӑ. Ҫапла вара сухаланӑ анасем хӑрса выртман. Ик-виҫ ернерен йешӗрекен калҙа йулташлӑх ҙленӗсен ҙӗринҙе шанҙӑк вутне тӗртсе йанӑ. Малалла, малаллах шунӑ ӗҫсем. Ҫирӗпрен ҫирӗпрех ҙӑмӑртаннӑ „Пуҙах".

## „ПЕТРОВ Ҫ. П." ертелӗ.

Хаҫат-шурналсем хӑйсен ӗҫнех тунӑ. Йалхуҫалӑхне ушкӑнлатса ҫӗнетесси ҫинҙен кӑшкӑрнӑ вӗсем. Йалта, хуласенҙе, ӑҫта пынӑ унтах тӗрлӗ лосӑнксене, плаккатсене курма пулнӑ. Вӗсенҙен нумайӗшӗ йулташлӑхсем, ертелсем орканисатсилеме кирлине кӑтартнӑ. „Ушкӑнра—вӑй"—тенӗ вӗсем.

Ҫавӑнпа йулташлӑхсем, ертелсем пӗр выранта кӑна пулман. Вӗсем аслӑ совет ҫӗршывӗнҙе ӑҫта пынӑ унта шӑта-шӑта тухнӑ.

Вĕсем куллен кун, çултан çул вăйланса, тĕрекленсех пынă. Хресђенсем ушкăнри лайăх пурнăçа кура ушкăн йенелле сулăннă.

Йулташлăх Сурăмра кăна мар, Сурскипе Кушер йалĕсенђе те пулнă. Вăл йалсенђи йулташлăхсем те Сурăмри „Пуђах“ йевĕр, хĕнпе ђăмăртаннăскерсем пулнă. Вăй сахал. Хутшăнмалла. Хресђенсем çĕнĕлле майлă хуçалăхран упаран хăранă пекех хăранă. Шанман. Турткаланса тăнă.

1928-мĕш çул. Кĕркунне. „Пуђах“ йулташлăха орканисатсилеме шухăш кĕнĕ вăхăт. Çак кунсенђе „Пуђах“ йулташлăха 4 çын пырса кĕнĕ. Камсемши вĕсем? Сурскипе Кушер йалĕнђи йулташлăх ђленĕсем пулнă вĕсем. Вĕсен вăйĕ Сурăмри йулташлăхран та сахалрах пулнă. Çавăнпа вĕсем:

— Пире хăвăр йулташлăх çумне хутшăнтармăрши?.. Икĕ пĕђĕк çеç ђăмăртак епĕр. Хамăр тĕллĕн нимех те тăваймăпăр. „Пуђахри“ йулташсем хастарлă иккенне илтсе килтĕмĕр кунта,—тенĕ 4 çын.

„Пуђах“ ђленĕсен савăнăçне шанăçтарма вырăн пулман. Вĕсен питĕсем сиђђĕ савăнăç йалтăртатнă.

— Калама çук аван шухăш ку епрĕн. Си-

ре хапӑл тума кирек хӑҫан та хатӗр епӗр. Есӗр пирӗнпе хутшӑнсан, пирӗн аллӑ хуҫалӑхлӑ ертел пулса тӑма пултарать,—тенӗ „Пуҫах“ претҫетаттӗлӗ Колессӑв.

Колессӑв сӑмахӗпе ытти ҫленсем те килӗшнӗ. Ҫак кунтан пуҫласа „Пуҫах“ йулташлӑх пулман. Ун вырӑнне ҫӗнӗрен, ҫӗнӗ йатлӑ 50 хуҫалӑхлӑ „Петров Ҫ. П.“ ертелӗ пулса тӑнӑ.

## Тӑшман йӑви.

Кӗтмен ҫӗртен ҫӑмӑртаннӑ „Петров Ҫ. П.“ ертелӗ кулаксен ӗмӗтне ҫапса хуҫнӑ. „Пуҫах“ кӑна пулнӑ пулсан тата мӗнлеҫҫӗ, ӑна ҫӗнтерме те пулатҫӗ пулӗ. Хаҫ ӗнтӗ вӗсем пушшех тӗреклентҫӗҫ, вӗсен 50 хуҫалӑхлӑ ертел: унпа ҫапӑҫма вӑй нумайтарах кирлӗ, унсӑрӑн парӑнтарас ҫук,—тесе шутланӑ кулаксем.

Ҫухӑнсем ертел вӑйлӑланса, тӗрекленсе пынине кура, унта кӗресси ҫинҫен шухӑшлама пуҫланӑ. Ӑҫта пынӑ унтах ертел ҫинҫен калаҫнӑ. Ку кулаксене пушшех йӗпленӗ.

— Мӗнлеха апла, куҫӑн-кӗретӗнех хамӑр алӑри вӑй вӗсен аллине куҫать. Мӗн те пулин тумаллах,—тенӗ вӗсем.

Каҫ. Кӗрхи киревсӗр, ҫиллӗ ҫӑмӑрлӑ каҫ.

Çитменне тĕттĕм. Ертел ҫлененсем пурте харпăр хăй килĕнҫе. Ертел ĕçне йертсе пыракан партти кăнтитаҫĕ Танилăв та, ыттисем пекех, килте пулнă. Вăл çывăрас шухăшпа вырăн çинҫе тĕлĕрсе выртнă. Сасартăк:

— Танил Танилҫă, уçха, ĕç пур, — тенĕ тулта пĕр сасă.

— Кам унта, мĕн сана?

— Епĕ Йăван...

— Е-е, Йăван, килех, кĕр еппин, — тенĕ Танил Танилҫă Хĕрлĕ çартан нумай пулмасĕ таврăннă Йăвана.

— Нумай калаçса тăмастăп, — тенĕ кĕрекен Йăван, — айта, тăмлан хăвăртрах, пухăва кайăпăр.

— Мĕнле пухăва?

— Пĕлместĕп, пуху пуррине кăна пĕлетĕп епĕ, — тенĕ вăл.

Танилпа Йăван пӳртрен тухсанах ертел претçетаттĕлĕ Колессăв патне ҫупнă. Колессăва ҫĕнсе тухса Йăван кăтартнă çулпа утнă вĕсем. Вĕсен умне пуйан Микишэнĕн çурҫĕ тухса тăнă. Çак пысăк çурт ҫӳреҫисенҫен тухакан çутă йарăписем кĕрхи тĕттĕм каçа çутатнă. Пӳртри шавланă сасса илтсенех унта халăх тулли иккенне пĕлме пулнă.

— Мĕн халăхĕ?—тенĕ Колессăв алăкра рыҫак тытса тăракан ҫынран ыйтса.

— Хамăр халăх, сирĕн ĕҫ ҫук унта,—тенĕ лешĕ касса татса.

— Мĕнле ĕҫ ҫук, есĕр пире систермесĕр пуху тăваттăр, пирĕн ĕҫ ҫуки?!—тенĕ Йăван.

— Пуҫусем сывă ҫухне саланăр, унсăрăн аван мар пулма пултарать,—тенĕ хуралҫă рыҫакĕпе сулкаласа.

Пухува кĕрес шухăшпа пынă ертел ҫленĕсем нимĕн тума аптăранă. Вăрҫса, йатлаҫса тăман вĕсем. Хăйсем ирĕккĕнех кайалла ҫавăрăнса килĕсене саланнă.

Пухура Микишанĕн Кирилипе Трахвинĕ хăйсен ĕҫĕсенех тунă.

— Колхоҫнĕксене ҫĕр касса памастпăр,— тесе кăшкăрнă вĕсем тарланă ҫамкисене шăлкаласа.

Ҫапла вара, Сурăмри Микишанĕн патĕнҫе кулаксен хăйсен, колхоса хирĕҫ тăракансен ушкăнĕн йăви пулнă.

Тепĕр кунне ирех ертелтен района вĕҫтернĕ. Районран килнĕ претставиттĕлсем нумай калаҫса тăмасăр, кулаксене йертсе пыракан Микишанĕнсене арĕсленĕ. Ертел ҫакăн хыҫҫăн ҫеҫ уҫҫăн сывлăш ҫавăрса

334
А-4.

йарса, малалла, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем патнелле уттарнӑ.

Ертел ђленӗсен хӗллехи вӑхӑђӗ ахаљ иртмен. Ӗҫ вӗренӗ. Вӗсем ҫуркуннене хирӗҫ тухса илме пур пек вӑйне хурса хатӗрленнӗ. Ушкӑнлӑ хуҫалӑх усси ҫинђен халӑха пухусем туса ӑнлантарнӑ. Йалти ђухӑнсемпе вӑтамсем те ҫура тухиђђен ертел йенне сулӑнни ертел ђленӗсен ђунне савӑнтарнӑ.

## Йӑрӑснӑр уйсем.

Ҫуркунне. Ҫӗр типнӗ. 50 хуҫалӑхлӑ ертел пӗрремӗш хут уйа суха пуҫӗсене пӑрахса, плукпа, тимӗр сӳресемпе тухнӑ. Машшинпа сухалама аван. Курпунланма кирлӗ мар. Ҫӑмӑл ӗҫ. Ушкӑнпа ӗҫленӗ май ӗҫ кунӗсем калама ҫук савӑнӑҫлӑ иртнӗ. Кун тӑршшӗ сисӗнмен. Анђах кунта ертелӗн уйрӑм касса илнӗ ҫӗр ҫукки ђылай ђӑрмантарнӑ. Ертел ђленӗсен анисем ӑҫта пынӑ унта уй тӑрӑх сапаланса выртнӑ. Ҫавӑнпа ӗҫ ӑнӑҫуллах пулман.

Ҫак майпах, ертел умне тата тепӗр пысӑк ӗҫ тухса тӑнӑ. Ку ӗҫ ҫӗре йӗркелесси пулнӑ. Уй ӗҫне пуҫтарнӑ май ҫӗре йӗркелес ӗҫ ер-

тел ђленӗсен пуҫӗнђен тухман. Ҫӗре йӗркелеменни ђӑнахах та пысӑк ђӑрмав пулнӑ. Ушкӑнпа ӗҫлеме ђӑрмантарнӑ вӑл.

Кӗркунне ҫитпӗ вӑхӑта ку шухӑша пурнӑҫа кӗртес ӗҫ пуҫланнӑ. Сурӑм ҫывӑхӗнђи тӑватӑ йалпа пухӑнса пухусем тукаласа ирternӗ хыҫҫӑн хресђенсем килӗшнӗ. Ертел хӑйне вађђи уйрӑм ҫӗр касса илнине, ертел ӗҫӗ вӑйлансах, тӗреклентсех пынине курсан, Сурӑмри хресђенсем ертеле кӗме кӑмӑл тунӑ. Ҫапла вара ҫӗрйӗркеленӗ май ертеле тата 31 хуҫалӑх хутшӑннӑ. Ку ертел пурнӑҫӗнђи ҫитӗнӳсенђен ђи палли пулни паллах ӗнтӗ. 81 хуҫалӑхлӑ, 370 йетаклӑ ертел первайхи хут йӑрансӑр уйра ыраш аки тунӑ. Ертел ђленӗсен ӗҫри хастарлӑхӗ ыраш акинђе татах та вӑйлӑраххӑн палӑрнӑ.

## Харпӑр хӑйӗн сук.

Уйри тырпула пӗр ҫӗре пухса кӗрсен ку таранђђен йаланах ҫапуҫҫипе авӑн ҫапса пурӑннӑ. Кӑҫалхи ҫул 81 хуҫалӑх вӑйӗпе авӑн ҫапмалли машшин туйаннӑ. Пур пек тырпула машшинпа ҫапнӑ вӗсем.

— Машшинпа ӗҫлеме ҫӑмӑлҫке. Хулҫурӑма ҫӗмӗрмелли ҫук. Йурра кӑна шӑрантар.

Машшин ӗҫлет. Тӗшӗлет пуђахсене, — тенӗ ертелри хӗрарӑмсем.

Ертеле кӗменнисем, ҫәв тери хӑвӑрт, хастарлӑ, савӑнӑҫлӑ кула-кула ӗҫлекен ертел ђленӗсене курсан, ђӑнахах та кӗвӗҫнӗ. Ытти хресђенсем ҫур ӗҫ тунӑ вӑхӑта, вӗсем ӗҫе пӗтернӗ. Кӗвӗҫмесӗр. Ертел ђленӗсем ҫак хӗрӳллӗ ырми ӗҫре кунран кун пӗр-пӗринпе ҫывӑхланса пырса, ушкӑнлӑ пурнӑҫ йӗркисемпе хӑнӑхсәх пынӑ.

— Ушкӑнпа тӑк, ушкӑнпа ӗҫлес. Ӗҫӗ те, йалхуҫалӑх хатӗрӗсем те ушкӑнӑн пулђђӑр пӗрех хут. Харпӑр хӑйӗн, сан, ман тени ан пултӑр пирӗн хушӑра, — тенӗ нумайӗшӗ.

Ҫакнашкал калаҫакансем хушшинђе урлӑ пирлӗ шухӑшлакансем, турткаланакансем те пулнӑ. Анђах малтанхи шухӑшлисем нумайтарах пулнӑ. Ҫавӑнпа вӗсем ҫӗнтернӗ.

Шухура ку ыйту пирки:

— Мӗнле апла, харпӑр хӑйӗн йапалисӗр.

— Хамӑр йапаласене ертел туман вӑт, хамӑр тӑрӑшса тунӑ.

— Ҫук, килӗшместпӗр епӗр апла...

— Тухатпӑр епӗр!..

— Ку таранђђен ертелсӗрех пурӑннӑ. Выҫӑ вилмӗпӗрха! — т. ыт. тем тӗрлӗ калаҫакансем

те пулнă. Кунашкал калаçакансен йыщĕ сахал пулнă çав. Нумайĕшĕ „сан ман ан пултăр“—тенĕ. Хирĕç тăракансем те вĕсем нумайăннине кура парăннă. Тем тĕрлĕ кăшкăрнă пулин те, вĕсен ертелрен уйăрлас килмен. Ертел вĕсене темшĕн çав тери çывăх туйăннă.

„Харпăр хăйĕн, сан ман ан пултăр“—тесе йышăннă нуху.

## Хура мĕлкĕсем.

Ертел пысăк утăмсемпе малалла пыни йал куштанĕсемшĕн кĕтмен йапала пулнă. Ертел вĕсене таптамаллипех таптанă. Кулаксен аллинчен йулашки, чи шанчăклă хуçалăхсем вĕçерĕнсе ертел çумне çыпçăнса, хутшăнсах пынă. Хирĕçмеллипех хирĕçнĕ кулаксем. Анчах вăй сахалланса çитнĕ май нимех те тăвайман. Çавăнпа ертеле ăçтан та пулин сийен тумалли мел шыранă вĕсем.

Ертел ĕçне йертсе пыракансем сисÿллĕ, клас кĕрешĕвĕнче пиçнĕскерсем пулнă. Çыварман вĕсем. Чи малтан тунă йалхуçалăх машшинĕсене йусамалли маçтерской патĕнче, тата ертелĕн ытти пурлăхĕ патĕнче йалан

хурал пулнӑ. Кунӗн-ҫӗрӗн ҫеретлӗ хурал тӑнӑ ертел ҫленӗсем.

Ҫакнашкал каҫсенҫен пӗринҫе ытла та тӗттӗм пулнӑ. Куҫпа пӑхса ҫывӑхри ҫынна та курма пулман. Хуралҫӑ ҫылайҫҫен уткаласа ҫӳренӗ хыҫҫӑн ыйхӑланӑ. Маҫтерской ҫумӗнҫе тӗлӗрсе ларнӑ вӑл. Сасартӑк ун хӑлхине пӑшӑлтатнӑ сасӑсем пырса ҫапӑннӑ. Сиксе тӑнӑ вӑл. Ун куҫне пӗр-ик ҫалӑпра хура мӗлке курӑннӑ.

—Ҫӗрт,—тенӗ пӗри пӑшӑлтатса.

Ҫак сасса илтсенех хуралҫӑн шӑм-шакӗ ҫӳҫенсе ҫӗтресе кайнӑ. Вӑл нумай шухӑшласа тӑман. Йерипен йӑпшӑнса ертел ҫленӗсене систерме ҫупнӑ. Виҫҫӗн-тӑваттӑн маҫтерской патне ҫавӑрӑнса ҫитнӗ тӗле хура мӗлкӗсем пулман.

— Маҫтерскойа тивертсе йама килнӗ вӗсем. Епӗр ҫупса килнине сиссе тивертмесӗрех пӑрахса тарнӑ,—тенӗ хашкакан хуралҫӑ йӗпйӗпе тарлӑ ҫамкине шӑлкаласа.

— Маҫтерскойа тивертсе йанипе пире пӗтерес ҫук, епӗр вӑйлӑ, епӗр нумаййӑн. Хамӑр пурлӑха хамӑр сыхлама пултарӑпӑрха!—тенӗ ертел ҫленӗсенҫен пӗри тарӑхса.

## Куҫпах куртӑм.

Ертел историне епӗ ертел ђленӗпе калаҫнинђен аса илсе ҫыратӑп. Вӑл мана „пирӗн пата май килсен пырса курха“—тесе сӗннӗђђӗ. Кайса курасси ҫинђен ђылай шухӑшланӑ епӗ. Анђах нийепле те вӑхӑт тупса кайаймарӑм

Кӑҫал ђӑваш пролеттари писсаттӗлӗсен прикати респуплӗкри колхоссемпе совхоссене каймалла тенине илтсен, епӗ мана прикатӑпа йама ыйтрӑм. ЂАПП правленийӗ килӗшрӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ҫеҫ епӗ хам ӗмӗте пурнӑҫа кӗртрӗм.

* * *

Сурӑм йалне епӗр виҫҫӗн кайрӑмӑр. Малтан калана пек илемлӗ вырӑнтах ларать иккен вӑл. Хӗрлӗђутай йенђен пырса кӗнӗ ђухне йалӑн сулахай ҫунатти хурӑнлӑ сип-симӗс йешӗрекен вӑрманпа ҫыпҫӑнас пек тӑрать. Йал урлӑ леш йенђе вӗҫхӗррисӗр, сип-симӗс сӑр вӑрманӗсем курӑнаҫҫӗ. Илемлӗ вӑхӑт. Ӑҫта пынӑ унта сапакаллӑ ђӑлт шурӑ ҫӗмӗрт ђеђекӗсем ҫурӑлнине курма пулать. Куҫпа курмасан та, вӗсен ытарайми шутлӑ шӑрши-

сем ирӗксӗр хӑйсем ҫине пӑхтарса асӑрхаттараҫҫӗ.

Йала ҫитсе кӗрсен пӗр вырӑсла хапха умӗнҫе ҫаранса тӑтӑмӑр.

—Комун правленийӗ ҫавӑнта,—тесе кӑтартрӗҫ хресҫенсем. Пӳрте кӗреҫҫен малтан, епӗ кунта ватӑ ҫынсене тӗл пулатӑпха тесе шухӑшласа илтӗм. Кӗтӗмӗр. Пирӗн умра виҫӗ ҫамрӑк сӗтелсем хушшинҫе хут ҫырса лараҫҫӗ.

— Комун правленийӗн ҫленӗсене ӑҫта та пулин тупма пулмӗши?—тесе ыйтрӑм епӗ.

— Епӗ претҫетатлӗ пулатӑп, ак ҫаксем ҫленӗсем,—терӗ пӗр ҫамрӑк типпӗмрех сарӑ аҫа.

Ҫӑнахах та тӗлӗнтӗм епӗ. Неушлӗ ҫак ҫамрӑксем ҫав тери пысӑк ӗҫ тума пултараҫҫӗ, текен шухӑшсем ман пуҫа хупӑрласа ыталаса тытрӗҫ. Тӗлӗнмеллех пулнӑ ҫав, хӑйсем куҫпа пӑхма нимех те мар, ӗҫне курсан ҫӑварна картарса пӑрахаҫҫӗ.

— Айтӑр еппин, хамӑр пурнӑҫпа паллаштарӑпӑр сире,—терӗ хайхи претҫетатлӗ. Урама тухса каллех хамӑр килнӗ ҫулпа утрӑмӑр.

— Ак ҫакӑ пирӗн йалхуҫалӑх машшинӗсене йусамалли маҫтерской, ку вӑхӑтлӑх столовӑй,—терӗ вӑл тимӗрҫ лаҫҫипе пӗр ҫӗнӗ пӳрте кӑтартса.

Пыратпăр. Столовăй патĕнҫех пĕр лупас йевĕрлĕ вырăн. Кунта кухњă иккен. Ҫĕре ҫавса лартнă шуҫпа витнĕ виҫĕ пысăк хуран айĕнҫе вут йăлкăшса ҫунаť. Вут ҫĕлхисем хурансен хуп-хура сарлака хырăмĕсене ҫуллаҫҫĕ. Кунта тăватă хĕрарăм. Ахаљ тăмаҫҫĕ вĕсем, вĕсен пурин аллинҫе те ĕҫ. Пĕри пысăк шап-шурă ҫăка йăвăҫран тунă ывăс ҫинҫе сухан тураť, тепри уйран уҫăлаť. Пĕри ҫунман вутпуҫҫисене урлă-пирлĕ ҫавăра-ҫавăра хураť. Тăваттăмĕшĕ хурана йама кĕрпе ҫуса хатĕрлет.

— Ҫакăнта пирĕн апат пĕҫерелҫĕ. Айтăр хаљ ĕнтĕ столовăйа кĕрсе курар,—терĕ претҫетатлĕ.

Столовăйа кĕнĕ-кĕменех куҫ умне ҫи малтан ҫтена ҫумĕнҫе ҫакăнса тăракан хура хăмапа хĕрлĕ хăма курăнҫĕҫ. Хĕрли ҫинҫе:

| |
|---|
| *Никколайĕва Акулинăпа Алексантрăвă Йеленăна Выљăхсене пăхакан совет хĕрлĕ хăма ҫине кĕртет.* |

тесе ҫырнă. Виҫĕ ҫăсланка сĕтел. Кунта та хĕрарăмсем ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем уйран ĕҫлесе тавă-

рăнакан комунарсене вађђи апат çиме ђашăктирĕксене çуса хатĕрлеççĕ.

— Кăшт ларса канăр та, çĕнĕрен тăвакан столовăй патне кайăпăр, хаљ халап йарса кăтартсан та ђăрмантармĕ сире,—терĕ пирĕн претçетатлĕ.

— Кăçал йанвар уйăхĕнђе епĕр комун уставне йышăнтăмăр. Хĕллехи вăхăтра çуртйĕрсем тума вăрман турттартăмăр. Хастарлă пĕр çын пек, ўркенмесĕр ĕçлеççĕ ђленсем. Кун каçиђђен ĕçлесе ырмаççĕ. Каçхине пухусене тухаççĕ. Йалхуçалăхне ушкăнлатас ыйтăва епĕр хĕл каçиђђенех сўтсе йавнă. Хĕрлĕ улахсенђе, хĕрарăмсен пуххисенђе те ку ыйтупах ĕçлĕ пулнă. Хушăран çпектаккăљсем те лартса паркаланă. Çав ĕç пурпĕрех сайа каймарĕ пирĕн. Комун йышĕ хутшăнни вăл ĕçсем усăллине кăтартат. Хаљхи вăхăтра пирĕн лишшонтсăсемсĕр пуçне йалĕпех комунра тăраççĕ. 104 хуçаçалăх, 410 йетаклă пирĕн комун. Çитменне çак çуркунне калама çук пысăк çитĕнўсем палăрђĕç: сат пахђисене пĕрлештернĕ. 3 пусăллă уйран тăхăр пусăллă уйа кўçнă. Çак хамăр ларакан столовăйа тунă. Ушкăнпа апат çийетпĕр епĕр. Пирĕн хĕрарăмсем килĕ-

рен апат пӗҫерсе ҫӑрманмаҫҫӗ. Вӗсем ытти кирлӗрех ӗҫсене тӑваҫҫӗ. Ак хаҫхи вӑхӑта илсе пӑхар. Пирӗн тӗрлӗ ӗҫре тӗрлӗ прикатӑсем ӗҫлеҫҫӗ. Суха тӑвакан прикатӑра — 14 ҫын; сӳре сӳрекен прикатӑра—6 ҫын; акакансем—3; ҫуртйӗр тӑвакансем—13; лашасене пӑхакан прикатӑра—6; ӗнесене пӑхаканнисем—8; сыснасене пӑхаканнисем—4; ҫамрӑк пӑрусене пӑхаканнисем—4; кухҫӑра ӗҫлекен—4; пахҫа-ҫимӗҫе тирпейлекенсем—30; маҫтерскойра тӑваттӑн; вӗсенҫен 2-шӗ йалан ӗҫлекенсем т. ыг. Ҫапла вара пирӗн пурте харпӑр-хӑй ӗҫне тӑваҫҫӗ. Ыран мӗн тӑвассине йаланах пӗлсе тӑраҫҫӗ вӗсем. Кашни прикатӑ ҫумӗнҫе йертсе пырекканни пӗр ҫын. Ахаҫ пулсан, уйрӑм хуҫалӑхра ӗҫлесен никам та укҫа памасҭ, кунта пирӗн кашнинех (ӗҫленине кура) 60 пусран пуҫласа 1 тенке ситеҫҫен кашни куллен ӗҫ укҫи илсе тӑраҭ. Ӗҫлессине те сехет тӑрӑх, 10 сехет ӗҫлеҫҫӗ,—терӗ вӑл хавасланса.

— Ӗҫ укҫи тӳлетпӗр тетӗн есӗ, ӗҫ укҫине тӳлеме укҫа тенкӗ ӑҫтан тупатӑр вара есӗр,— тесе интереслентӗм епӗ.

Ҫав вӑхӑтрах манӑн йулташсем Акаккӑвпа Ҫисҭакков ытти ҫынсемпе кулкаласа калаҫса

ларнине асӑрхарӑм. Вӗсем те комун пурнӑҫӗпе ман пекех интересленеҫҫӗ иккен тесе шухӑшларӑм епӗ.

— Ӗҫ укҫинеи?—терӗ Колессӑв,—ара пирӗн тоххот паракан претприйаттисем пур. Пӗр ҫил арманӗ, тепӗр шыв арманӗ. Маҫтерской та комун ӗҫне анҫах ӗҫлемест, кунта таврари хресҫенсем те нумай килеҫҫӗ. „Комун маҫтерскойӗ аван ӗҫлет, ҫас туса парать“ — теҫҫӗ вӗсем. Тата епӗр сӗт, мунҫала сутса та укҫа тӑватпӑр,—терӗ вӑл малалла ҫӑсса.

Ҫакнашкал калаҫса ларнӑ вӑхӑтра уйра ӗҫлекенсем таврӑрна пуҫларӗҫ. Апат ҫиме вӑхӑт ҫитнӗ. Епӗр претҫетатлӗпе пӗрле ҫӗнӗрен тӑвакан столовӑй патнелле тухса утрӑмӑр. Уйран таврӑнакансем пире пуҫ тайса хапӑл туни пит те кӑмӑла карӗ. Пурте савӑнӑҫлӑ вӗсем, ӗҫрен ырса таврӑннӑ теме ҫук вӗсене.

— Сирӗн выҫӑх-ҫӗрлӗхсем ҫылай-и?—терӗм епӗ ҫула майӑн.

— Выҫӑххисем сахал мар, ҫителӗклӗ. Кайса кӑтартмалаҫҫӗ сире, вӑрманта вӗсем. инҫерех пулать пулӗ. Сӑвакан ӗнех—68, мӗн пурӗ - 98. Вӗсенҫен ӑратлисем „красно корпаттӑвски“— 30 ӗне. Пӑрушсем—56; икӗ ӑратлӑ вӑкӑр.

Лашасем—48; ѣыха—3. Ăратлă ăйăр—2; кĕсресем—3; сурăхсем—216; сыснасем—53.

Уйри тырпул ҫине питех шанмастпăр епĕр. Пирĕн кунта выљăх-ђĕрлĕх усрама аван. Вăрмантах ҫу каҫаҫҫĕ вĕсем. Малашне выљăх-ђĕрлĕх усраса усă курас йенелле сулăнас шухăш пур. Ҫу савăђĕ тума йăвăҫ хатĕрĕсем ҫитнĕ ĕнтĕ, туса лартасси ҫеҫ йулнă.

— Ҫулла ҫапла та, хĕлле выљăхсене ăҫта усрас теттĕр вара?—терĕм епĕ.

— Иртнĕ хĕлле ак ҫакăнта пурăннă пирĕн выљăхсем,—терĕ Колессăв вăрăм ђăсăлакан сарайа кăтартса.

— Ăна пăсса кăҫал ҫĕнĕрен выљăх килкарти тăватпăр. Йăвăҫсем ҫителĕклех марха,—терĕ вăл столовăй тунă вырăна ҫитсе кĕрсен.

— Астуман та, ҫак кăтартнă выљăх килкартине кăҫал краҫҫын сапса ђĕртсе йама хатĕр леннĕ. Кулаксем ҫав тери курайманҫҫĕ пире,—терĕ вăл ҫĕнĕ столовăй ҫуртне пырса кĕрсен.

Ҫĕнĕрен тăвакан столовăй ҫуртне кĕрсен пысăк шкула пырса кĕнĕнех туйăнђĕ. Комунарсем унта та кунта та кăткă пек кĕшĕлтетеҫҫĕ. Кунта та ҫамрăксем. Хăшпĕрисем саваласҫĕ, теприсем каскалаҫҫĕ. Ђўређе йанаххисене самаскă сĕрекенни, сăрлаканни,



Комунăн çĕнĕ столовăйĕ.

тем-те-пĕр тăваканни те пур. Вĕсем ĕçленине курсан ђун савăнаť. Ђăнахах та сотсиалисăм тăватпăр тетĕн. Ирĕксĕрех çăвартан тухаççĕ çав сăмахсем. Аçтан савăвас мар, ăçтан кăмăла хытарса пăхан вĕсен ĕçĕ çине. Комунарсем хăйсем тăрăшнипе хăйсене вађђи шкул пек пысăк çурт, столовăй тăваççĕ. Кунта 410 йатак пĕр çемйе пек, пĕрле апат çимелле пулаť. Çак çуртрах—кухнђă.



Столовăй тунă çĕрте ĕçленĕ утарнăй прикатă.

— Акă курăр ĕнтĕ, ку пирĕн столовăй пулаť. Çакна туса пĕтернĕ хыççăн кăçалах 100 пуç хупса усрамалли выђăх килкарти, сыснасене усрамалли уйрăм вырăн, ађа çурђĕ, тата йаçлĕ туса пĕтерес шухăш пур—терĕ тăнлантарса комунарсенђен пĕри.

— Хăш вырăна тăвас теттĕрха есĕр вăл çуртсене?—терĕ ман йулташ.

— Ак çакăнта, вăрманпа йал хушшинҫе пулаççĕ вĕсем,—терĕ леш сип-симĕс йешĕрсе выртакан ыраш калҫисем çине кăтартса.

Вăл çеç мар-ха, йулташ, пирĕн çак çулсенҫе çĕнĕ йал пулаŤ. Планне те хатĕрлесе хунă епĕр. Ун ҫухне вара пирĕн пурăнăç ҫăн-ҫăн комунисăм ҫухнехи пек пулаŤ. Ваттисен, хĕрарăмсен, çамрăксен т. ыт. уйрăм опшҫешиттисем пулаççĕ. Халăх çурҫĕ, ун тавралла сат, тĕрлĕ ҫеҫексем йешĕрсе ларĕç. Ку столовăйа та епĕр план тăрăх тăватпăр. План çинҫе çак вырăнта лармалла унăн. Çапла вара çитес кунсен сăн-сăпаҫĕ çав тери илемлĕ пулаŤ.

— Вăл çапла та, халҫхи вăхăтра мĕнле пурăнаттăр есĕр? Тĕрлĕ култтурсем акса хăвартăри?—тесе ыйтрĕ манăн тепĕр йулташĕ.

— Пуринҫен ытларах епĕр хĕллехи вăхăта валҫи выҫăх апатне хатĕрлесси çине тайанатпăр. Хăвăрах каларăмçке, пирĕн патра епĕ выҫăх ытларах усраса усă курма пуласси çинҫен. Çу савăтне те çавăнта лартатпăр. Кăçал 50 кектар клевăр акса хăвартăмăр. 14 кектар вырăнне вăрлăхлăх викка акрăмăр.

— Мĕнле, машшинсемпе ĕçлеттĕри есĕр,— терĕм епĕ.

— Машшинсемпе, машшинсем пурха пирĕн. Туйанкаларăмăр. Тырă акмалли машшин—2; плуксем—22; авăн çапмалли машшин—1; трийĕр—1; вейăлккă—5; сик-сак тийекен сўресем—3; улăм турамалли, йĕтĕн тылламалли, икĕ уйран уçламалли машшинсем, тата виçĕ планеттă пур. Планеттăсемпе çĕре типесрен кăпкалатса тăратпăр,—терĕ комун пуçлăхĕ.

Çакнашкал каласа тăнлантарнă хыççăн, епĕ тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм. Ђăнахах та тĕлĕнмелле. Пĕђĕкçеç çĕре пĕрлешсе ĕçлемелли „Пуђах“ йулташлăхран çав тери пысăк комун туса лартнă. Çитменне ик-виç çул хушшинђе вăл нихăçан пулман, çав тери пысăк хăвăртлăхсемпе малалла утса, кунран кун вăйлăланса тĕреклеисех пыраťçке. Комунарсем хастарлă, ырма пĕлмесĕр ĕçлени ăна аванах туйтарђĕ. Хам ăçта иккенне те манма пуçланă епĕ. Претçетатлĕ:

— Интересленеттĕр пулсан, пулас çĕнĕ йалăн планне кăтартма пултаратăп,—тенине те тĕлĕкри пек çеç илтнĕ. Манăн ђун хавалĕ „Петров Ç. П.“ комунăн йухса пĕтми çăлкуçĕ пек пăлкаса тăракан вăйĕпе çĕкленнĕ.

Епӗр ушкӑнпа каллех вӑхӑтлӑх тунӑ столовӑй патне утнӑ. Ҫул ҫинҫе парниксем, виҫӗ пин хурлӑхан йӑвӑҫҫи лартнӑ вырӑна курнине ҫеҫ лайӑх астӑватӑп. Ыттине ҫук, астумастӑп. Манӑн пуҫа хастарлӑ шухӑшсем ыталанӑ. Ҫавӑнпа епӗ комун пурнӑҫӗнҫен пуҫне урӑх нимӗн ҫинҫен те шухӑшламан.

Вӑхӑтлӑх тунӑ столовӑйра. Сӗтел ҫинҫе пулас ҫӗнӗ йалӑн планӗ. Пӑхатӑп. Пулас ҫӗнӗ йал мар ку сирӗн, пулас ҫӗнӗ хула, пулас сотсиалисӑм,—тесе кӑшкӑрса йарассӑм килҫӗ. Йулташсем умӗнҫе аван маррине кура ҫех тытӑнса тӑтӑм.

Пулас ҫӗнӗ йалӑн сӑнсӑпаҫӗ ман куҫ умне ҫакнашкал курӑнса карӗ вара: йал варӗнҫи сип-симӗс саг пахҫипе ҫеҫек куракӗсем ӑшне путнӑ пысӑк клуп. Тавралла сӑрласа тунӑ илемлӗ ракаткка. Пӗр ӗретӗнҫе ҫамрӑксен, ваттисен, хӗрарӑмсен, аҫапӑҫасен ҫурҫӗсем илемлӗн курӑнаҫҫӗ. Кашнин умӗнҫе сӑрланӑ ракаткапа карса лартнӑ сип-симӗс йӑвӑҫсем. Вӗсенҫен инҫех те мар аҫасен йаҫли, хаҫ туса пӗтерекен столовӑй. Тепӗр ӗретӗнҫе тӗрлӗ выҫӑх-ҫӗрлӗхсен килкартийӗсем. Енесен, лашасен, сурӑхсен, сыснасен, кашни тӗрлӗ выҫӑхсен харпӑр хӑйсен уйрӑм ҫурт,

уйрăм капинет пек пӳлĕмсем. Хăрах айăккинче—сават. Ак ăçта вăл сотсиалисăм!—тесе чунтан кăшкăрас килет ман. Анчах чĕлхе çăвар çыхланнă, епĕ кăшкăраймастăп. Тĕлĕннипе ĕнтĕ вăл.

Столовăйран тухсанах епĕр, йалхуçалăх машшинĕсене, вĕсене йусамалли маçтерскойа т. ыт. курса çӳрерĕмĕр. Курса пĕтернĕ хыççăн нумайах тăмарăмăр вара, „Трушеннĕк“ комуна карăмăр. Çитес çулсенче çакнашкал татах килсе курăр, терĕç пире ăсатакансем.

## Йулашкинчен çакна калас килет.

Пирĕн чăваш çĕршывĕнче кăна мар, пĕтĕм Совет Сойусĕпе ушкăнлă хуçалăх йухăмĕ йулашки çул вăйлăран та вăйлăрах, хурçăла çирĕп вăйсемпе хускалса, тапранса кайни палăрчĕ. Ку йухăм чухăнпа вăтамсен вак, уйрăм хуçалăхĕсене чăмăртаса, пĕр çĕре пĕтĕçтерсе йалăн кăпиталисла тымарне кăклакан йухăм пулса тăчĕ.

Çĕре пĕрлешсе ĕçлемелли йулташлăх „Пучах“. Мĕншĕн чăмăртаннă ку йулташлăх? Йулташлăха кĕрекен членсен пурнăçĕ аван пулнă пулсан, тырри-пулли, выльăх-чĕрлĕхĕ те çителĕклĕ пулнă пулсан чăмăртанатчĕç-и

вĕсем? Çук, ђăмăртанмасђĕç. Çитмен, ђухăн пурнăç пĕтĕçтернĕ вĕçене. Пĕђђен вăй çитмен пирки, вĕсем хăйсен пурнăçне ушкăнпа пухăнса, пĕр çын пек тăрăшса ĕçлесе лайăхлатас ĕçе тытăннă. Ахаљ каламан вăт „тĕнђерен пĕрер сĕм çип пухсан та, çарамас çынна ваљђи кĕпе çĕлесе пама пулаť" тесе. Çавнашкалах пуçланнă Пуђахăн ĕçĕ те. Вĕсем 10 хуçалăлран 3 çул хушшинђе 104 хуçалăха çитнĕ. Мĕн ђухлĕ хуçалăх нумайтарах, çавăн ђухлĕ комун, ертел йе йулташлăх та вăйлăрах, тĕреклĕрех пулаť.

Кулаксем, пуп таврашсем т. ыт. ĕçлекенсемпе хресђенсен влаçне хирĕç пыракансем ушкăнлă хуçалăх çулне мĕншĕн çав тери картлама, вăл йухăма ђарса лартма тăрăшаççĕ? Ђухăн кирек хăçан та ĕлĕкреннех хăйĕн çитмен пурнăçĕ хĕссе пынă май ниçта кайса кĕме пĕлеймесĕр кулак патне кайса тăраннă. Кулак унпа мĕнле усă курмаллине çынран ыйтса тăман, вăл ђухăнпа мĕнле усă курмаллине хăйех аван пĕлнĕ. Кивçен вăрлăх парсан, икĕ пай кайалла тавăрса илнĕ. Йалхуçалăх хатĕрне усă курма парсан та, унщăн укçасăр ĕçлеттерсе ђухăна ăнран йанă. Тара тытса ĕçлеттерес пулсан та, çур хак парса

ĕçлеттернĕ. Мĕн тĕрлĕ мăшкăламан, мĕн тĕрле мăшкăламанши вĕсем ђухăна... Етем пулман çав вĕсемшĕн ђухăн. Çавăнпа вĕсем ђухăна хăйсен аллинђе тытса тăрса, унпа мĕн тăвас килнĕ çавна тунă. Пуп таврашĕсем те вĕренмен (вĕренме пултарайман ĕлĕк ђухăн) тĕттĕм хресђене тĕн сĕрĕмĕпе хупласа пуйансене пăхăнма вĕрентнĕ. Вăтам хресђенсен çити-çитми пурнăçне кулаксем сăхса пурăннă.

Ушкăнлă хуçалăх,—ђухăнпа вăтамсен пĕрлешӳллĕ вăйĕ. Çак—йалăн киревсĕр капиталисла тымарне тĕппипе кăкласа пăрахса, таптаса пыракан вăй. Ђухăнпа вăтамсем кулаксемпе пупсемсĕр пуçнех, хăйсем тĕллĕн, хăйсене кирлĕ пек çĕнĕ, сотсиалисăмла хуçалăх тăваççĕ. Çавăнпа кураймаççĕ кулакпа пуп таврашĕсем колхоса. Анђах Сурăмри „Петров Ç. П.“ комунĕнђе тăракан комунарсемпе пĕтĕм Совет Сойусĕнђи комунарсем малашне кулаксемпе пупсен куçĕнђен пăхас çук. Вĕсен умĕнђе аслă, комунисăм патне йертсе пыракан çĕнĕ сотсиалисăм çулĕ йалтăртатса çуталса выртать. Ана никам та картлаймĕ, ун çийĕпе хĕнхур витĕр тухнă, тар йунпа пиçнĕ, хурçă пек çирĕп вăйлă ĕçлекенсемпе хресђенсен çарĕ утать.

Цена 11 коп.

Алгагер В. ДЕРЕВНЯ В БУДУЩЕМ. Очерк.

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1930